# Михаил Иванович Скворцов – çуталса тăракан пур енлĕ талант

**(Чăваш улăпĕ, словарь ăсти – Михаил Иванович Скворцов çуралнăранпа 85 çул çитнине халалланă уяв сценарийĕ)**

***Уяв тĕллевĕ:*** ачасене тăван чĕлхене упрама, ăна юратса вĕренме хавхалантарасси, чĕлхе илемĕпе пуянлăхне туйма, пĕлӳлĕхе ӳстерме пулăшасси, словарьсемпе ĕçлеме вĕрентесси.

***Уяв эпиграфĕ:*** «Сăмахра – сăнар, словарьте – алфавит йĕркипе вырнаçнă пĕтĕм çут тĕнче...» *Анатоль Франс*

***Ертсе пыракан:*** Ман çĕр-шыв –
Çĕр-пин тĕрĕ çĕр-шывĕ,
Калаçать вăл çĕр-пин сăмахпа.
Ун çĕр-пин тĕррине эс куç хывăн
Чи телейлĕ, таса туйăмпа.

***В. Шемекеев***

***Ертсе пыракан:*** Çырла пахчи евĕр пуян чĕлхене
Юратар, чăваш ачисем, ĕмĕрне!
Юратар ăна çын çинче, кил-çуртра,
Юратар ăна паянхи юрăра.

***Ертсе пыракан:*** Ырă кун пултăр туссем, ытарайми чăваш çыннисем! Паян – пысăк уяв. Çак уява чăваш улăпĕ, словарь ăсти – Михаил Иванович Скворцов çуралнăранпа 85 çул çитнине халаллатпăр. Чăваш чĕлхи пуян та илемлĕ, янăравлă та çепĕç, паха та асамлă. Вăл чăваш юрри пек янăравлă та кĕвĕллĕ, унпа чуна ачашлама е амантма, çĕклеме е ӳкерме, хавхалантарма пулать.

***Ертсе пыракан:***
Çĕршывсем нумай тĕнчен,
Пĕринчен тепри – илемлĕ.
Эпĕр – Улăп йăхĕнчен,
Чи ирĕклине иленнĕ.

Халăхсем нумай тĕнчен,
Пĕринчен тепри – тĕреклĕ.
Эпĕр – Улăп йăхĕнчен,
Сапăр та сатур чĕреллĕ.

Эпĕр – Улăп йăхĕнчен:
„Атăлçи – тăван кил!“, - тетпĕр,
Туссене мĕн пур енчен
Çăкăр-тăварпа кĕтетпĕр.

Эпĕр – Улăп йăхĕнчен,
Тымарсен чакни хăват пур,
Ĕмĕт инçете чĕнсен,
Çăлтăр витĕр çул хыватпăр.

***Энтип Ваççи***

***Ертсе пыракан:*** Улăп йăхне чапа кăларакансем чăнах та нумай. Вĕсенчен пĕри – чăваш улăпĕ, словарь ăсти – Михаил Иванович Скворцов.

**Скворцов Михаил Иванович** – чăваш тĕпчевçи, филологи ăслăлăхĕсен тухтăрĕ, профессор (1992). 1933 çулхи кăрлачăн 8-мĕшĕнче Канаш районĕнчи Иккĕмĕш Хурамалта çуралнă. 1997 çулта Чăваш Енĕн тава тивĕçлĕ ăслăлăх ĕçченĕ ятне тивĕçлĕ пулнă.

Михаил Иванович Хусан университечĕн филологи уйрăмĕнче (1954), Мускаври университет çумĕнчи Хĕвел тухăç чĕлхисен институтăн араб чĕлхисен уйрăмĕнче (1964), аспирантурăра (1971) пĕлӳ пухнă. Чăваш Енĕн телевиденипе радиовещани комитечĕн председателĕн заместителĕ (1964–1967), Чăваш патшалăх педагогика институчĕн

вĕрентекенĕ, доценчĕ (1973–1976), Чăваш патшалăх университечĕн доценчĕ (1977–1997) пулнă. Чăваш Енĕн вĕрентевçĕсен ăсталăхне ӳстерекен институт (халĕ Чăваш Рсепубликин вĕренӳ институчĕ) профессорĕ (1989 çултанпа) вырăнĕнче ĕçленĕ.

***Ертсе пыракан:*** Михаил Скворцов – чăваш лексикографийĕпе терминологийĕн паллă специалисчĕ, вăл чăвашла-вырăсла словарьсене хатĕрлес, редакцилес ĕçе хастар хутшăннă. Чăваш шкулĕн пуçламăш тата вăтам класĕсенче, вырăс шкулĕсенче, техника професси училищисенче вĕренекенсене тăван чĕлхене ăша хывма пулăшакан словарьсем пичетленĕ. Скворцов студентсем валли хатĕрленĕ вĕренӳ пособийĕсенче куçарупа унăн теорийĕн кĕске историне, куçарăвăн семантика, лексикăпа фразеологи ыйтăвĕсене тишкернĕ.

**Ĕçĕсем**

*Русско-чувашский общественно-политический словарь. Ч., 1973;*
*Русско-чувашско-венгерский разговорник. Ч., 1981;*
*Чăвашла-вырăсла словарь. М., 1982, 1985;*
*Вырăсла-чăвашла куçару теорийĕпе практики. Ш., 1984;*
*Чăваш лексикографийĕ. Ш., 1985;*
*Чăвашла-вырăсла словарь. Ш., 1989;*
*Русско-чувашский словарь. Ч., 1992;*
*Русско-чувашский словарь. Ч., 2012.*

***Ертсе пыракан:*** Словарьсем кирек хăш халăхăн чĕлхине, культурипе историне тĕпчесе вĕренме, пĕтĕм халăх чĕлхин литература формине аталантарма, унăн нормисене йĕркелеме, общество пурнăçĕнчи нумай тĕрлĕ хутшăну нушисене тивĕçтерме, халăхăн пĕтĕмĕшле пĕлӳлĕхĕпе культура шайне ӳстерме кирлĕ.

***Ертсе пыракан:*** Вăтам тата аслă шкулта словарьсем ку чухнехи вĕренӳ-методика комплексĕн кирлĕ пайĕ шутланаççĕ. Тăван чĕлхепе вырăс чĕлхине тата ют çĕршыв чĕлхисене вĕрентес ĕçре вĕсем питĕ пысăк вырăн йышăнаççĕ.

***Ертсе пыракан:***
Тӳсейместĕп – юрлап та ярап
Тус-тăван куç тулли пулнăран,
Тӳсейместĕп – юрлап та ярап
Çав сăмах чĕререн тухнăран…

***„ Ан кай кайăк" юрă.***

**ача**: **Тымарĕ –чĕлхе**
Атте - аннене сутас марччĕ,
Вĕсен туррине астуса,
Юрласчĕ, ташласчĕ, савнасчĕ,
Чăваш купăсне каласа.

Атте- аннесем те йăшаççĕ,
Виç ĕмĕр паман пурăнма.
Каяççĕ, анчах тăрăшаççĕ
Йăлтах çĕр çине хăварма.

Мĕн пĕлнĕ, мĕн тунă-пуçтарнă
Çилпе салатман пурнăçне.
Вăй çитнĕ таран йăлт пултарнă,
Упранă чăваш тымарне.

Тымарĕ – чĕлхе вăл. Чĕлхешĕн
Инкек те, синкек те куран.
Чăвашăн чĕлхийĕнче чĕрешĕн
Тĕрккес те сăпайсăр пулман.

Çакна ăнланса пуль кĕлтунă
Тухса каяс умĕн çула.
Чĕлхеллĕ этемĕн – йăх юлнă,
Ламран лама куçнă йăла.

***Виталий Шемекеев***

**1-мĕш ача:** «Кала, юлташ, мĕн хаклă саншăн
Хальхи пуян çак тĕнчере?» -
Тесе ыйтсан, сывламăп ассăн,
Эп калăп пат: Тăван чĕлхе! Чăваш чĕлхи!

**2-мĕш ача**: Чăваш чĕлхи – атте чĕлхи!
Чăваш чĕлхи – анне чĕлхи!
Атте-анне чĕлхи! Çиç ĕмĕр!

**3 -мĕш ача**: Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе
Эс – чи пахи, эс – чун уççи.
Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе,
Пин чĕлхерен чи çепĕççи.

**4-мĕш ача:** Эй, чĕлхем! Анне панă чĕлхем!
Янăра эсĕ çут тĕнчере!
Ыттине çĕр чĕлхе хуть пĕлем,
Эсĕ манăн пĕрре çеç, пĕрре!

**5-мĕш ача:** Эй, чĕлхеçĕм, сана юратса
Çак сăвва эп вулатăп чунтан.
Ирхи сывлăм пек эсĕ таса,
Эс хрусталь савăт пек янăран.

***Ертсе пыракан:*** Чăваш чĕлхи! Эс чăваш юманĕ пек ватă та патвар, хăвăн хăватна çухатмасăр çултан-çул тĕрекленсе пыратăн. Мухтавлă чăваш çыннисем тăван чĕлхемĕре тĕнче умне кăларчĕç, унăн ятне çӳле çĕклерĕç.

***Ертсе пыракан:***
Туссем калаçнă чух, тăван чĕлхемĕм,
Шур акăш тĕкĕ евĕр эс çемçе.
Санпа ман халăх чунĕ те илемĕ
Çӳрет çӳлте те çĕр çинче вĕçсе.

***Яков Ухсай***

***«Илемлĕ, илемлĕ»*** *юрă янăрать*

***Ертсе пыракан:*** Чăваш çĕр-шывĕ! Çĕр пин юрă, çĕр пин тĕрĕ çĕр-шывĕ! Чăнах та юррисем кăна мĕн тĕрли çеç çук пулĕ чăваш халăхĕн: ташламалли такмак, хастарланмалли марш, мухтамалли гимн… Ташши, ташши тата мĕнле илемлĕ те çăмăл!

***«Чăваш ташши»***

***Ертсе пыракан****:* Мĕн тери çепĕç те илемлĕ чăваш чĕлхи! Вăл ылтăн-кĕмĕлтен те хаклăрах, хĕвелпе танах хĕрӳ те хӳхĕм. Кашни сăмахĕ чуна пырса тивет.

***Ертсе пыракан****:*
Çын çынпа пурăнать.
Çын çынпа савăнать.
Çын!
Хăватлăн янăрать сан яту.

Çын юраттăр çынна,
Хисеплетĕр çынна.
Çын патне эс васка.

***Ертсе пыракан***:
Ырă, ырлăх, ыркăмăллăх … Епле сăпайлă та килĕшÿллĕ сăмахсем. Чăваш чĕлхинчи чи ăшă туйăмсемпе çиçекен, чун хавалне хăпартлантарса тăракан асамлăх пытаннă тейĕн вĕсенче. «Сана усал тума çуратман, ырă тума çуратнă! Ăна эсĕ ан ман – мĕн вăй çитнĕ таран çынсене ырă тума тăрăш», - тенĕ И.Я.Яковлев.

***Ертсе пыракан***: Йăнăшмасăр утма,
Пултараймăн эс ху та
Ас ту,
Çав çынна пулăшма
Йăлт куçран калама,
Эс васка ун патне
Ырă ту.

***Ертсе пыракан***:Чăнах, пирĕн çакă тĕнчере пĕр пурнăç кăна. Ăна вара чыслă пурăнса ирттермелле. Чыса ырă çын кăна тивĕçлĕ. М.И.Скворцов «Чăвашла-вырăсла» словарьте çакăн пек ăнлантарать: «Ыр кăмăллăх – çынсене ăнланма, пулăшма тăрăшни, ырă тума ăнтăлни».

**ача**: Ырă сăмах
Ыр сăмах калама ан ÿркенĕр.
Ыр сăмах – ырă вăрлăх пекех.
Тулăх чун-чĕрене вăл ÿкĕт-тĕк-
Ырă тухĕ шăтса кĕпĕрех.
Ыр сăмах калама ан ÿркенĕр –
Вăл лексен типсе хăрнă чуна –
Тĕппипех пулмасан та (ĕненĕр!) –
Пăлхантарĕ кăштах сив юна.
Ыр сăмах калама ан ÿркенĕр –
Пулмасан та хăш чух ун усси –
Пулас çуккă сиен. Ан хĕрхенĕр! –
Ыр сăмах чылай чух – чун уççи.
Ыр сăмах калама ан ÿркенĕр!

***Раиса Сарпи***

***Сценка***

**Амăшĕ** (Улăп ача чĕркесе тухать). Улăп ача темерĕн çав, сехктсерен ÿсет. (Ача А-А-А_ тени илтĕнет.) Ак тамаша. Ак тĕлĕнтермĕш илтетĕр-и, ачасем? Кипке ашĕнчен тухиччĕнех «А» сас палли вулама вĕренчĕ. Ăçтан пĕлет-ши алфавитри пĕрремĕш сас палли «А» пулнине? (Ача У-А, У-А, У-А тени илтĕнет.) Ак тĕлĕнтермĕш. Тăнă çĕртех сыпăкпа вулама пуçларĕ. Çав тери маттур пулать пуль ку ача. Шкула кайса ярам-ха ăна хăвăртрах. (Тухса каять. Тепĕр енчен Улăп ача ползункипе, ĕмкĕч çакса янĕ) тухать, аллинче - «2» паллăсем лартса тултарнă дневник.)

**Улăп ача:** Урокĕсем питĕ вăрăм. Эх, тĕнче!
Вĕçĕ-хĕрри ун курăнмасть. Тур çырлах!
Ыйтсан эпĕ ним пĕлмерĕм. Эх, тĕнче!
«Иккĕ» лартрĕç пит çиллентĕм. Тур çырлах!

**Ертсе пыракан: (**тухать). Çапла пулать вăл Яковлев вĕрентнине мансан, тăван чĕлхене вĕренмесен. Итле - мĕн калать аслă вĕрентекенĕмĕр.

**И.Яковлев:** *(сцена хыçĕнчен вулани илтĕнет).* **«Халăхăн ăс-тăнĕпе унăн пĕтĕм**

**тĕнче курамне таван чĕлхе чун парать. Тăван чĕлхесĕр чăн-чăн пĕлӳ çук».**

**Улăп ача:** Эпĕ айăплă-им? Пирĕн чăвашсен вĕренме кĕнеки те çук тет, ăна .ĕе сисе янă тет (кĕрсе каять).

**Вĕрентекен: (**хытă кăшкăрса хут листин çуррине сулласа тухать). Тупрăм! Тупрăм!

**Çĕр ĕçченĕ:** (халатпа; пашкаса пырса кĕрет). Мĕншĕн уру çине ĕне таптанă пек çухăратăн? Мĕн тупрăн?

**Вĕрентекен:** Чăвашсен ĕне çисе ярайман кĕнкен пĕр листине тупрам - вăл та пулин çурри çеç, çавна вуласа парас тетĕп.

**Çĕр ĕçченĕ:** Çурри акă манра. (Хĕвĕнчен хут листи кăларса кăтартать.) Малтан эпĕ вулатăп, мĕншен тесен ман çĕр ĕçченĕн çăкăр тума васкамалла, çавна ачасене вĕрентмелле.

**Ертсе пыракан: (**тухать). Ан хирĕçĕр, Яковлев халалне асра тытăр.

***И.Яковлев** (сцена хыçĕнчен вулани илтĕнет).* **«Чăвашсем хушшинче килĕшӳсĕр ĕç час-часах пулкалать, эпĕ савна пĕрре анчах курман… Пĕр-пĕринпе сапăр пулăр, çукшăн-пуршăн чăркăшса çӳресрен, харкашасран аякра тăрăр».**(Ертсе пыракан каять.)

**Çĕр ĕçченĕ:** Юрать, килĕшетĕп. Пĕр пайне эсĕ, теприне эпĕ - черетпе вулăпăр. Пуçла.

**Вĕрентекен:** Ачасене пĕлӳ парас тесен чи малтан вĕсен пуçне ĕçлеттермелле.

**Çĕр ĕçченĕ:** Пĕр шăйрăк хăвармасăр сухаласа тухмалла та им-çам сапса кăпкалтмалла.

**Вĕрентекен:** Çакăн хыççăн сыпăкăн-сыпăкăн…

Çĕр **ĕçченĕ:** Вăрăм касăсем чĕрсе вăрлăх акса хăвармалла.

**Вĕрентекен:** Тăнлă ачасем хăвăрт вулама вĕренеççĕ.

**Çĕр ĕçченĕ:** Çанталăкĕ лайăх пулсан сип-симĕс ешерме тытнаççĕ.

**Вĕрентекен:** Кун хыççăн ачасене вăрăмрах калавсем те пама юрать.

**Çĕр ĕçченĕ:** Унсăрăн симĕсскерсем сарăхса лараççĕ.

**Вĕрентекен:** Ача отличник пуласси вара ...

**Çĕр ĕçченĕ:** Çум курăксене вăхăтра пĕтернинчен килет. (Пус тайса кĕрсе каяççĕ.)

***И.Яковлев** (сцена хыçĕнчен вулани илтĕнет).* **«Килĕшсе ĕçленĕ ĕç пысăк усăллă. Çакна пĕлсе тăрăр».**

**Ертсе пыракан:**(тухать). Халь ĕнтĕ пирĕн Яковлев туса панă чăваш алфавичĕ те, кĕнеки те, шкулĕ те пур. Паллашар-ха ачисемпе. (Кĕрсе каять, икĕ арçын ача хире хирĕç çĕлĕк йăтса тухаççĕ.)

**Пĕр ачи:** Эсĕ мĕншĕн çĕлĕкне сĕтĕрсе пыратăн?

**Тепĕр ачи:** Ху тата мĕншĕн тăхăнман?

**Пĕр ачи:** Эпĕ пĕрремĕш класра «Букварь» вуланаранпа тек урăх пер сас палли те вуламаниç. Çавăнпа ман пуç мими те типме пуçлар. Пуç та пĕчĕкленет. Акă кур - çĕлĕк юрами пулчĕ. (Çĕлĕкне тăхăнса кăтартать - çĕлĕкĕ анса ларать.)

**Тепĕр ачи:** Эпĕ вара пĕтĕм кирлĕ-кирлĕ мара вулатăп. Пуç та пысакланса пырать - çĕлĕк кĕми пулчĕ. (Çĕлекне тăхăнса кăтартать.)

**Ертсе пыракан: (**тухать). Эх, ухмахсем, Яковлев вĕрентĕвĕпе пурăнмалла ăна: ун чух пуç та виçеллĕ юлать: çĕлĕк те пуç çине ларать.

***И.Яковлев** (сцена хыçĕнчен вулани илтĕнет).* **«Тăван чĕлхе пулăшнипе кивĕ ăнлавсене çĕнетсе аталантарма та, çĕнĕ хунавсем ӳстерме те пулать».** (Кĕрсе каяççĕ.)

**Вырăсланнă чăваш** (тухать). Тупăнна, понимаешь, вĕрентекенсем. Эпир сами халь понимать тăватпăр все и Яковлев заветне те асра тытатпăр.

***И.Яковлев** (сцена хыçĕнчен вулани илт.нет).* **«Вырăс халăхĕ питĕ пысăк халăх, эсир ăна юратса пурăнăр, вăл малалла чаплăланса кайсан унпа пĕрле эсир те чаплаланăр. Унпа тачă пуранма тăрăшăр».**

**Вырăсланнă чăваш**. Эпĕ сак сăмахсене очень четко запоминать тунă та вырăссене те, чăвашсене те обижать тăвас мар тесе икĕ чĕлхипе те харăсах говорить тăватăп. (Каять.)

**Ертсе пыракан:** (тухать). Ытлашши тăрăшса пăрахрамăр пулмалла, пĕтĕмпех пăтранса кайрамăр. Иван Яковлевич, пулăш.

*И.Яковлев (сцена хыçĕнчен вулани илтенет).* «Ху чĕлхӳне пăрахманни вырăс халăх ĕçне ултавлă туса сутни пулмасть вăл: аннĕрсенчен вĕренсе юлнă хăвăн тĕп челхӳне парахмасăрах вырăссен аслă патшалхĕшĕн ĕçлесе тама пулать. Тăван чĕлхесер чăн-чăн пĕлӳ çук».

**Ертсе пыракан** (тухать). **. . .** çул çитрĕ Иван Яковлев чăваш ачисене чăвашла вĕрнтме пуçлани, сапах та...

**Улăп ача:** (дневникпа тухать, юрлать):

Дневникре «5» - сем куранмаççĕ.

Шăкăрах лараççĕ «2» - сем.

Каçăхса кайсах ĕнте вăрçаççĕ

Тăн парас текен учительсем.

**Вĕрентекен:** (тухать). Эх, мнтарăн ачисем. Шалккă палах, анчах хайсем айăплă. Яковлев халалне асра тытман.

***И.Яковлев*** *(сцена хыçĕнчен вулани илтенет).* **«Ӳркенсе ыт ахальтен анчах ĕçлесен чăн пысăк ĕç те пăрахăça тухать, хисепрен каять. Юратса тусан чи пĕчĕк ĕçе те чаплăлантарса яма пулать».**

**Вĕрентекен:** Ку чăнах çапла пулнине ĕнентерсе пирĕн шкулта вĕрнекенсем хăйсем çырнă пĕчĕк, анчах чаплă сăввисене вулаççĕ. (Малалла ачасем черетпе тухса савăсем вулаççĕ).

**Пурте тухаççĕ (**аллисенче Яковлев синчен калакан кĕнекесем, юрлаççĕ):

Карти-карти кĕнеке карти
Кĕнеке вуласа ӳсрĕмĕр.
Эх, ӳсрĕмĕр,
Çавăнпа ăслă пултăмăр.

**Вĕрентекен:** (мала тухать). Шкул вăл - пĕр пысăк çемье. Çавăнпа эпĕ юлашкинчен Яковлев сăмахĕсенех итлеме çĕнесшĕн.

***И.Яковлев*** *(сцена хыçĕнчен вулани илтенет).* **«Килĕштерсе тĕреклĕ тăракан çемьешĕн... пурнăç синкерĕ хăрушă мар».**

**(**Пурте пуç тайса кĕрсе каяççĕ.)

ача: **Чăвашсем, чăмăртанăр!**
Пирĕн ват несĕлсем
Курнă çут Байкала.
Чăваш сасă пани
Икĕ пин çул ытла.
Ваттисен ячĕпе,
Чăвашсем, чăмăртанăр!
Пĕр пулса пуринпе
Пирĕн чап та янратăр.
Чăвашсем, чăвашсем,
Чăвашсем, чăмăртанăр!
Пирĕн шурсухала
Мăн Эльбрус астăвать.

Килĕштернĕ çынсем
Кавказри çĕр-шыва.
Атăлçи Пăлхарта
Ӳснĕ пирĕн ратне.
Çитнĕ унăн элчи
Киев Руçĕ патне.
Парăнман несĕлсем
Тутар ханĕсене
Вырăспа пĕрлешсе
Уçнă ўсĕм çулне.
Ырлăх çулĕпе халь
Йыш утать маллала.
Хытăрах янратар
Юрăсем чăвашла.

***П. Ялгир***

***Юрă***

***Ертсе пыракан:*** Тĕлĕнмелле çын пулнă Михаил Иванович Скворцов: ырă кăмăллă, сăпайлă, ăслă, пултаруллă, мал ĕмĕтлĕ. Унăн ячĕ пирĕн пурнăçра ĕмĕр-ĕмĕре сывă пултăр, нихçан та манăçа ан тухтăр. М.И. Сквоцовăн словарĕсем чăваш халăхĕ валли çырса хăварнă халал пек туйăнать. Пурнăça тем пек юратсан та, ырă ĕмĕчĕсем калама çук пысăк пулсан та 84-а çывхарса пыракан Михаил Иванович, шел пулин те, 2016 çулхи раштавăн 1-мĕшĕнче çут тĕнчерен уйрăлса кайнă.

***Ертсе пыракан:***
Никольскипе Ашмарин,
Сироткинпа Егоров, Петровпала Андреев,
Чернов, Сергеев, Виноградов,
Скворцов çырнă словарьсем
Асăнмалăх чĕр палăк
Шутланаççĕ халăхра.
Эпир пĕрле, тусăмсем,
Словарьсене уçăпăр.
Авалхине аса илсе
Малаллине курăпăр.
Тавах, сире, пиччесем,
Сăмах тĕнчин ăстисем,
Ăс пуçтарса ĕçлеме
Паха словарь панăшăн!

***Л. Петрова***

***Ертсе пыракан:***
Пурăн чĕвĕлти чĕлхемĕр!
Пурăн, шăнкăрти чĕлхе!
Сана нимле хăват хуплаймĕ
Çакă çутă тĕнчере!

***Ертсе пыракан:***
Чăвашăмсем! Сире телей сунатăп,
Ан сивĕнĕр тăван чĕлхемĕртен.
Мансан – чĕлхесĕр янавар пулатпăр.
Чĕлхе пулсан – пĕтместпĕр ĕмĕрте! ...

***Раиса Сарпи***